27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
МАЙ
27
ШАМАТКУН
104(6599) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН
ХАҪАЧӖ

Комбайнсемпе тырпулсене пухса кӗртмелли машинӑсене вӑхӑтра юсаса хатӗрлер

Кӑҫалхи ҫураки ҫакна кӑтартса пачӗ: тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисене, инвентаре вӑхӑтра та. тӗплӗн юсанӑ машинно-тракторнӑй станцисемпе колхозсем уйхир ӗҫӗсене те ӑнӑҫлӑ туса пыраҫҫӗ. Малта пыракан Шӑхасан, Красноармейски, Йӗпреҫ, Вӑрнар, Елчӗк, Ҫӗрпӳ, Тӑвай, Куславкка МТС-ӗсем ҫурхи ӗҫсен планне ӑнӑҫлӑн тултарчӗҫ. Ҫав вӑхӑтрах чылай машинно-тракторнӑй станцисем ҫуракинче питех те сӳрӗк ӗҫлеҫҫӗ.

Малта пыракан МТС-сен ӗҫри ӑнӑҫлӑхӗ, чи малтан тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисене, кӑкарса ӗҫлемелли инвентаре ҫураки валли кӑтартуллӑн хатӗрлесшинчен килчӗ. Е тата пачах урӑхла. Шупашкар, Шӑмӑршӑ, Пӑрачкав машинно-тракторнӑй станцийӗсем хатӗрленӳ ӗҫӗсене ҫиелтен турӗҫ, ҫавна пула вӗсем ҫуракин хӗрӳ кунӗсенче тракторсене йӗркеллӗ ӗҫлеттерме пултараймарӗҫ. Ҫавӑн пекех чылай колхозсем, сеялкӑсем йӗркеллӗ ӗҫлемен пирки, ҫурхи тырӑсене алӑпа акса агротехникӑпа пӑсрӗҫ, ҫуракине хӑвӑртрах ирттерес ӗҫре машинӑсен вӑйӗпе пачах усӑ курчӗҫ, халӗ те ҫителӗксӗр усӑ кураҫҫӗ-ха. Ҫавна пула ҫураки вӑраха тӑсӑлса пырать.

Тырпулсене уйхиртен пухса кӗртмелли ответлӑ тапхӑр ҫывхарнӑҫемӗн ҫывхарать. Ӑна пур енчен те кӑтартуллӑ хатӗрленсе кӗтсе илмелле. Тырпулсене пухса кӗртес ӗҫӗн ӑнӑҫлӑхне те, тӗпрен илсен, комбайнсем, утӑ ҫулмалли машинӑсем, жнейкӑсемпе лобогрейкӑсем, молотилкӑсем, вӑрлӑх тасатмалли машинӑсем, локомобильсемпе нефтедвигательсем йӗркеллӗ ӗҫлени татса парать. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи тӑваттӑмӗш уборкӑна организованно ирттерес тесен, вӑйлӑ тырпул туса илессипӗн ҫулталӑк хушши кӗрешни сая ан кайтӑр тесен, республикӑри МТС-семпе совхозсен тата колхозсен комбайнсемпе тырпулсене пухса кӗртмелли машинӑсене уборка валли вӑхӑтра, лайӑх пахалӑхпа юсамалла, вӗсене йӗркеллӗ ӗҫлеттерме ӑста кадрсем хатӗрлемелле.

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ кӑҫалхи майӑн 10-мӗшӗнче республикӑра комбайнсемпе уборка машинисене юсаса хатӗрлесси ҫинчен постановлени йышӑннӑ. Унтанпа шӑпах икӗ эрне иртрӗ. Сахал вӑхӑт мар, анчах чылай районсенче ку ӗҫе халӗ те пуҫӑнман-ха. Канашпа Вӑрмар МТС-ӗсен директорӗсем Зайцевпа Петров юлташсем комбайнсемпе уборка машинисене юсама ҫураки хыҫҫӑн кӑна пуҫӑнас сиенлӗ шухӑшпа пурӑнаҫҫӗ. Государствӑн ҫак питех те кирлӗ ӗҫӗ ҫине Зайцевпа Петров пек ответсӑррӑн пӑхма паянхи кунпа кӑна пурӑнакан, малашлӑха пачах та курман тимсӗр руководительсем ҫеҫ пултараҫҫӗ.

Канашпа Вӑрмар МТС-сӗсенче комбайнсемпе уборка машинисене юсама кирлӗ материалпа техника базине майӑн 15-мӗшне ҫитиччен хатӗрлеме тытӑнман, комбайнсемпе уборка машинисене юсама пуҫӑнман, юсамалли графика туман, кашни комбайнпа молотилкӑн мӗнле пайӗсене юсамаллине пӑхса тухман, мастерскойсене запаслӑ пайсем хатӗрлемелли плана ҫирӗплетсе паман, юсас ӗҫе комбайнерсемпе машиноведсене пурне те явӑҫтарман.

Ку ҫеҫ те мар, Канаш МТС-ӗнче 14 комбайнран пӗрне те иртнӗ ҫулхи пылчӑкран тасатман, комбайнсен ҫӗҫҫисене хедертан кӑларман, вӗсем ҫаплипех пылчӑк ӑшӗнче хӗл касӑнӑ. Комбайнсен тырӑ ҫапакан пайӗсене, хедерсене тӗрлӗ ӑпӑр-тапӑртан тасатман. Хӗлле тирпейсӗр пӑхса усранӑ пирки хедерсем чалӑшса пӗтнӗ, мотовилӑсем ҫӗмӗрӗлнӗ, запаслӑ пайсене унта-кунта сапаласа пӗтернӗ. Вӑрмар МТС-ӗнче те ҫакӑн пек ҫитменлӗхсемех.

Ыйтас килет: Канашпа Вӑрмар МТС-сен директорӗсем Зайцевпа Петров юлташсем тата унти ялхуҫалӑх машинисем енӗпе ӗҫлекен механиксем Павловпа Авакумов юлташсем комбайнсемпе молотилкӑсене йӗркене кӗртме, юсама запаслӑ пайсем хатӗрлеме халь, хатӗрленӳ ӗҫӗсене пурнӑҫа кӗртме вӑхӑт пур чухне, «ерӗҫеймеҫҫӗ» пулсан, тырпулсене пухса кӗртмелли хӗрӳ тапхӑр ҫывхарсан пушшех мӗнле ӗлкӗрӗҫ-ха?

Социализмлӑ ҫӗрӗҫӗн малта пыракан ҫыннисем ялхуҫалӑх ҫулӗнчи мӗнпур ӗҫсене вӑхӑтра туса пама вӗреннӗ. Ҫавӑнпа ҫураки тесе комбайнсене, уборка машинисене юсассине иккӗмӗш черетри ӗҫ вырӑнне шутлани—пачах та тӗрӗс мар. Ҫакна шута илсе тата Оборонӑн Государственный Комитечӗн постановленийӗпе килӗшуллӗн, Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ МТС-семпе совхозсене, райӗҫсене комбайнсемпе уборка машинисене, утӑ пухса кӗртмелли машинӑсене юсамалли плансем, уйӑхри графиксем ҫирӗплетсе панӑ. Республикӑра **утӑ пухса кӗртмелли машинӑсене июлӗн 1-мӗшӗччен, комбайнсене, жнейкӑсене, молотилкӑсене, вӑрлӑх тасатмалли машинӑсене, локомобильсемпе нефтедвигательсене — июлӗн 20-мӗшӗччен пӗтӗмӗшпех юсаса ҫитермелле.**

Совнаркомпа парти Обкомӗн бюровӗ ҫирӗплетнӗ ҫак плансене, графиксене, сроксене пӗр пӑркаланмасӑр пурнӑҫа кӗртмелле.

Тӳрех калас пулать, чылай МТС-сен ҫак уйӑх ҫурӑ хушшинчех питех те пысӑк ӗҫсене пурнӑҫа кӗртме тивет. Кувакино, Улатӑр, Пӑрачкав, Елчӗк, Чкаловски, машинно-тракторнӑй станцисен уйрӑмах комбайнсем нумай, вӗсенчен чылайӗшне тӗпрен юсамалла. Кувакино районӗн, сӑмахран, 38 комбайнран 10-шне тӗпрен юсамалла.

Комбайнсене юсаннипе пӗрлех, МТС-семпе колхозсенче жнейкӑсемпе лобогрейкӑсене, молотилкӑсемпе вӑрлӑх тасатмалли машинӑсене юсас ӗҫсене те хӑвӑртлатас пулать. Халь ҫак ӗҫсене чылай районсенче сӳрӗккӗн туса пыраҫҫӗ-ха, хӑшпӗр ҫӗрте пачах та пуҫӑнман. Республикӑра утӑ ҫулмалли 1.135 машина, лашапа утӑ пуҫтармалли 708 кӗрепле юсамалла. Ҫак шутран утӑ ҫулмалли 492 машинӑна, 344 кӗреплине май уйӑхӗнче юсаса хатӗрлемелле. Анчах ку ӗҫ питех те вӑраххӑн пырать-ха. Ҫавӑн пекех вӑрлӑх сортламалли машинӑсем юсасси те ҫителӗксӗр хӑвӑртлӑхпа пулса пырать.

Республикӑра кӑҫал 7 локомобиль, 211 нефтедвигатель ӗҫлемелле. Локомобильсем Шупашкар, Улатӑр, Комсомольски, Канаш, Шӑмӑршӑ районӗсенче ытларах. Анчах вӗсене юсама чылай ҫӗрте тытӑнман та.

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ комбайнсемпе уборка машинисене юсаса хатӗрлес ӗҫе райисполкомсен председателӗсемпе ВКП(б) райкомӗсен секретарӗсене хӑйсен аллине илме, ҫак ӗҫ мӗнле пулса пынине куллен тӗрӗслесе тӑма хушрӗҫ.

Пирӗн республикӑра комбайнсемпе уборка машинисене вӑхӑтра та лайӑх пахалӑхпа юсаса хатӗрлеме пур майсем те пур. Комбайнерсене, комбайнерсен помощникӗсене тата сложнӑй молотилкӑсем ҫинче ӗҫлекен машинистсене пурне те, вӗсем урӑх ӗҫре пулсан, халех МТС-семпе совхозсене комбайнсем, молотилкӑсем юсама тата малашне те унта яланлӑх ӗҫлеме ямалла.

Комбайнсемпе уборка машинисене лайӑх пахалӑхпа юсамалла. Юсанӑ хыҫҫӑн вӗсене государство комиссийӗ тӗрӗслесе йышӑнать. Ҫав комиссире райисполком председателӗ е ВКП(б) райкомӗн секретарӗ (председатель), МТС е совхоз директорӗ тата старши механик пулаҫҫӗ, ҫавӑн пекех комбайнсене ҫирӗплетсе панӑ комбайнерсемпе машинистсем хӑйсем те кӗреҫҫӗ. МТС-семпе совхозсенчи ытти уборка инвентарьне МТС директорӗ, старши механик тата трактор бригадин бригадирӗ тӗрӗслесе, акт ҫырса йышӑнаҫҫӗ. Уборка машинисене колхозсенче райисполком е райҫӗрӗҫ пайӗн. представителӗ председатель пулса ертсе пыракан комиссии актпа йышӑнать. Ҫав комиссие колхоз председателӗ, уйӗҫ бригадин бригадирӗ те кӗреҫҫӗ.

Комбайнсемпе уборка машинисене юсамалли запаслӑ пайсене чылайӗшне вырӑнтах — МТС-сен мастерскойӗсенче, предприятисемпе заводсенче туса хатӗрлемелле. Совнаркомпа ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ республикӑри промышленность тата чугун ҫул транспорчӗн предприятийӗсене, вырӑнти промышленность артелӗсене комбайнсемпе уборка машинисен запаслӑ пайӗсене хатӗрлеме задани ҫирӗплетсе панӑ. Предприятисемпе артельсен руководителӗсен, унти парторганизацисен ҫак заказа, государствӑн питех те кирлӗ ӗҫӗ вырӑнне шутласа, вӑхӑтра пурнӑҫламалла.

Кунпа пӗрлех комбайнсемпе тата уборка машинисемпе ӗҫлеме кадрсем хатӗрлесси ҫине те тимлӗн ҫаврӑнса пӑхмалла. Ҫителӗксӗр комбайнерсемпе машиноведсене уйӑхлӑх курссенче вӗрентсе хатӗрлемелле. Совнаркомпа Обком ҫирӗплетнӗ план тӑрӑх, МТС-сенче 55 комбайнер, 371 машиновед тата колхозсенче 3.621 машиновед вӗрентсе хатӗрлемелле.

Комбайнсемпе уборка машинисене юсамалли уйӑхри задание пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе лайӑх ӗҫлекен МТС директорӗсене, механикӗсене, Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗ йышӑннӑ постановлени тӑрӑх, премисем памалла тунӑ. Райисполкомсемпе парти райкомӗсен, МТС директорӗсемпе унти парторганизацисен секретарӗсен ҫав постановлени ҫинчен кашни комбайнерпа машиноведа ӑнлантарса памалла. Комбайнсемпе уборка машинисене юсас ӗҫре социализмлӑ ӑмӑртӑва аплӑн сарса ямалла. Малта пыракансен опытне ыттисем хушшинче сармалла. Ҫак условисем комбайнсемпе уборка машинисене вӑхӑтра та лайӑх пахалӑхпа юсаса хатӗрлеме пулӑшӗҫ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАЙӐН 25-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Майӑн 25-мӗшӗнче фронтсенче паллӑ улшӑнусемех пулман

Майӑн 24-мӗшӗнче сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманан 17 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

ПИРӖН АВИАЦИ ТӐШМАНӐН ФИНН ЗАЛИВӖНЧИ ТРАНСПОРЧӖСЕНЕ ПЫРСА ҪАПНИ

Майӑн 25-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн авиацийӗ Финн заливӗнче нимӗҫсен икӗ транспортне курнӑ; пӗр транспорчӗ 4.000 тонна таякансккер, тепри 3.000 тонна таякансккер пулнӑ. Пирӗн летчиксем тӑшманӑн ҫак икӗ транспортне атакӑланӑ та шыва путарнӑ.

☆ ☆ ☆

Станислав хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре нимӗҫсем чылай участоксенче ҫапӑҫса разведка тума хӑтланнӑ. Пирӗн подразделенисем, тӑшман атакисене сире-сире ярса, нимӗҫсен 200 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Тыткӑна илнисем пур. Гварди рядовойӗ Непокрытый малалла тухнӑ та автоматпа персе 12 гитлеровеца вӗлернӗ, унтан вӑл нимӗҫсен блиндажне вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та гранатӑсемпе персе нимӗҫсен тата темиҫе салтакӗпе офицерне вӗлернӗ. Рядовой Барсук винтовкӑпа персе 5 нимӗҫе вӗлернӗ. Боецсем Байдевичпа Павлуцкий юлташсем пӗрремӗш хут боевой охранени тӑнӑ. Ҫурҫӗр тӗлнелле вӗсем хӑйсем патне 2 нимӗҫ ҫывхарса пынине курнӑ. Совет боецӗсем тӑшман разведчикӗсене хӗҫпӑшалсӑрлантарнӑ та тыткӑна илнӗ.

* * *

Витебск хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре разведчиксен ушкӑнӗ, Разорвин лейтенант командир пулса ертсе пынипе, ҫӗрле тӑшман тӑнӑ вырӑна кӗрсе кайнӑ. Пирӗн артиллери персе тӑнипе хӳтӗленсе, совет боецӗсем нимӗҫсен траншейисене вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та 60 гитлеровеца ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Хӑйсене панӑ задание пурнӑҫланӑ хыҫҫӑн разведчиксем, трофейӑсем илсе, хӑйсен чӑсне таврӑннӑ. Гварди старшини Илья Григорьев вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа нумай нимӗҫ салтакӗпе офицерне пӗтернӗ. Григорьев юлташ халӗ снайперсен подразделенийӗн командирӗ пулса тӑрать. Унӑн подразделенийӗнчи ҫамрӑк снайперсем пӗр уйӑх хушшинче 200 гитлеровеца ытла вӗлернӗ.

* * *

Мозырь хулинчен хӗвеланӑҫнерехре ҫӗрле нимӗҫсен отрячӗ шыв урлӑ пирӗн енне каҫнӑ. Пӗр чаҫӑн боецӗсем тӑшмана сасартӑк атакӑланӑ та алӑ вӗҫҫӗн пулса иртнӗ тытӑҫура 40 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Темиҫе нимӗҫ каялла шыв урлӑ ишсе каҫма хӑтланнӑ, анчах вӗсене совет боецӗсем персе шыва путарнӑ.

* * *

Минск облаҫӗнче кӗрешекен Белорусс партизанӗсен «Тавӑру» ятлӑ отрячӗ нимӗҫсен ҫар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ. Ҫав крушенире снарядсем турттарса пыракан вагонсем сирпӗнсе кайнӑ тата 3 цистернӑ бензин ҫунса кайнӑ. Сулӗйсем юсаса ҫӳрекен команда вагонсен ванчӑкӗсем айӗнчен нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсен кӑмрӑкланса кайнӑ виллисене ҫӗре ярӑн туртса кӑларнӑ. Белосток хули ҫывӑхӗнче кӗрешекен партизансен «Боевой» ятлӑ отрячӗ май уйӑхӗн икӗ эрни хушшинче тӑшманӑн 13 ҫар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ. Ҫав крушенисенче темиҫе паровоз тата тӗрлӗрен ҫар хатӗрӗсем турттарса пыракан 90 вагон ытла ҫӗмӗрӗлсе пӗтнӗ.

* * *

Украинӑри 2-мӗш фронтра Хӗрлӗ Ҫар енне румынсен 1-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 85-мӗш полкран 23 салтак куҫнӑ. Вӗсем хӑйсемпе пӗрле хӑйсен хӗҫпӑшалӗсене те илсе килнӗ, пӗтӗмӗшпех пирӗн боецсене панӑ. Румынсен салтакӗ Константин ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Германи ку вӑрҫӑра аяла пулса юласси пирӗншӗн питех те паллӑ. Румынсем кун пирки хуйхӑрас ҫук. Пачах та урӑхла, эпир ун пирки савӑнатпӑр кӑна. Пирӗн халӑх, Румыние кӗрсе тулнӑ нимӗҫсенчен хӑтӑлса, ирӗккӗн сывласа ярӗ. Румынсен салтакӗсем мир тӑвасси ҫинчен кӑна шутлаҫҫӗ. Тыткӑна парӑнма шутлакан салтаксем те сахал мар, анчах та пирӗн тавра нимӗҫсем нумай. Нимӗҫ автоматчикӗсен ятарласа тунӑ подразделенийӗсем румынсене асӑрхасах тӑраҫҫӗ. Апрель уйӑхӗнче пирӗн дивизири пӗр полк вырӑссем хӗссе пынипе каялла чакма пуҫларӗ. Нимӗҫсем ҫав полка пеме пуҫларӗҫ, румын салтакӗсене нумайӗшне вӗлерчӗҫ. Нимӗҫсем пире ҫапла сыхласа тӑнӑ пулин те, эпир ҫапах та чаҫран тухса кайрӑмӑр та вырӑссен позицийӗсем патне авапах ҫитрӗмӗр».

* * *

Ҫак кунсенче Эршекуйвар хулинче (Венгри) венгерсен шалти ӗҫсен «министрӗ» Ярош сӑмах тухса каланӑ. Вӑл нимӗҫ оккупанчӗсене хирӗҫ ҫапӑҫма тӑракан Венгри ҫыннисене юнаса вӑрҫнӑ. «Кам нимӗҫсене хирӗҫ тӑрать», — тенӗ Ярош, — эпӗ ҫар дисциплинин мӗн иккенне кӑтартӑп». Малалла Гитлерӑн Венгрири хӳрешки ҫапла каланӑ: «Кам ҫак вӑрҫӑра чапа тухасшӑн, кам лавр венокӗ илесшӗн, вӑл пире Карпат тӑвӗсем леш енче тупма пултарӗ». Анчах та халь Венгри салтакӗсем лавр венокӗсемпӗн ҫунмаҫҫӗ. Вӗсем ҫакна лайӑх пӗлсе тӑраҫҫӗ: кам нимӗҫсемпе пӗрле Совет Союзӗпе Германи фронтӗнче лавр венокӗсем тупма тӑрӑшать, ун вырӑнне вӑл ылханлӑ вилӗм кӑна тупать. Гитлерӑн Будапештра ларакан тарҫисем салтаксене «Карпатсен леш енчи» походне хӑвалаҫҫӗ, Венгри салтакӗсем ҫумне жандармсен ятарласа тунӑ отрячӗсене тӑратаҫҫӗ. Анчах та вӗсене ҫавӑн пек тимлӗн сыхлаҫҫӗ пулин те, Венгри салтакӗсен пысӑк тата пӗчӗк ушкӑнӗсем кашни кунах Хӗрлӗ Ҫар енне каҫса килеҫҫӗ.

Ҫуракине вӗҫлемелли вунӑкунлӑх

ҪУРАКИНЕ ВӖҪЛЕМЕЛЛИ ФРОНТОВОЙ ВУНӐКУНЛӐХ МӖНЛЕ ПЫНИНЕ КӐТАРТАКАН СВОДКА

(Майӑн 26-мӗшӗ тӗлне).

Районсем	Миҫемӗш вырӑн йышӑнать
Красноармейски	1
Ҫӗрпӳ	2
Чурачӑк	3
Вӑрнар	4
Элӗк	5
Шупашкар	6
Калинино	7
Сӗнтӗр	8
Сӗнтӗрвӑрри	9
Муркаш	10
Елчӗк	11
Октябрьски	12
Шӑхасан	13
Вӑрмар	14
Тӑвай	15
Куславкка	16
Советски	17
Етӗрне	18
Канаш	19
Ишлей	20
Комсомольски	21
Чкаловски	22
Йӗпреҫ	23
Улатӑр	24
Первомайски	25
Ҫӗмӗрле	26
Пӑрачкав	27
Шӑмӑршӑ	28
Хӗрлӗ Чутай	29
Кувакино	30

Куславкка МТС-е ҫурхи ӗҫсен планне тултарчӗ

КУСЛАВККА, майӑн 26-мӗшӗ. (Телефонпа). Машинно-тракторнӑй станци ҫуракинче 3.200 гектар ҫинчи ӗҫе тумаллачӗ. Эпир ӗнерхи кун тӗлне 3.271 гектар ҫинчи ӗҫе турӑмӑр. Чылай бригадӑсем ҫурхи ӗҫсен планне ирттерсе тултарчӗҫ. МТС коллективӗ 1.370 килограмм горючи перекетлерӗ.

4-мӗш номерлӗ бригада (бригадирӗ Антонов юлташ) плана 125,5 процент пурнӑҫласа 487 килограмм горючи перекетлесе хӑварчӗ. Ҫавӑн пекех 3-мӗш бригада (бригадирӗ Мясников юлташ) плана 118.6 процент, 5-мӗш бригада (бригадирӗ Жолобов юлташ) 100,3 процент тултарчӗҫ, 150-шар килограмм ытла горючи перекетлерӗҫ.

МТС-ри пур трактор бригадисем те ҫураки ӗҫӗсене малалла туса пыраҫҫӗ.

ЛАВРЕНТЬЕВ,
МТС директорӗ.

Акса пӗтертӗмӗр

Йӗпреҫ районӗнчи «Коммунар» колхоз иртнӗ ҫулхинчен лайӑхрах ӗҫлерӗ. Ака вӑхӑтӗнче ҫумӑрлӑ кунсем нумай пулнипе пӑхмасӑрах, майӑн 17-мӗшӗ тӗлне пӗрчӗллӗ тата пӑрҫа йышши культурӑсене акса пӗтертӗмӗр. Уяр тӑнӑ кашни сехетпе туллин усӑ куртӑмӑр. Тракторсем кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлерӗҫ.

Майӑн 25-мӗшӗ тӗлне колхоз уйхирти ӗҫсене вӗҫлерӗ. Халь колхозниксен пахча вырӑнӗсене ҫӗрулми лартатпӑр.

Г. МИХАЙЛОВ,
Колхоз председателӗ

Чӑваш халӑхӗн поэтне С. В. Эльгер юлташа хӗрӳллӗ салам!

Хаклӑ Семен Васильевич!

Эсир ҫурални 50 ҫул тултарнӑ ятпа сире Чӑваш АССР Верховный Совечӗн Президиумӗ, Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ тата ВКП(б) Чӑваш Обкомӗ чӗререн саламлаҫҫӗ.

Хӑвӑрӑн паха произведенийӗрсемпе Эсир ӗҫчен чӑваш халӑхне пайтах усӑ патӑр, тӑван литературӑна аталантарассишӗн пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлерӗр, ӗҫлетӗр те.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ кунӗсенче Эсир хӑвӑр сӑввӑр-юррӑрсемпе чӑваш халӑхӗн паттӑр ывӑлӗсене ирсӗр тӑшмана ҫапса аркатма вӑй-хал парса пыратӑр, тылра фронт валли мӗнпур вӑя хурса ӗҫлекенсене тата пысӑкрах ҫитӗнӳсем тума хавхалантаратӑр.

Ырлӑхпа сывлӑх пултӑр Сире малашне те ӑнӑҫлӑн ӗҫлемешкӗн.

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ПРЕЗИДИУМӖ.
ЧӐВАШ АССР ХАЛӐХ КОМИССАРӖСЕН СОВЕЧӖ.
ВКП(б) ЧӐВАШ ОБКОМӖ.

Хаклӑ Семен Васильевич!

Эпир, чӑваш совет писателӗсем, Сире чӑваш халӑхӗн кӑвар чӗреллӗ юрӑҫине, пусмӑр тӗнчине ылханса ирӗклӗх хӗвелне мухтав юрри юрлакана, хӑвӑр ҫурални 50 ҫул тулатрнӑ ятпа чи ӑшӑ кӑмӑлпа хӗрӳллӗн саламлатпӑр.

Эсир, чӑваш совет литературин никӗсне хывакансенчен пӗри пулса тӑрса, тӑван поэзин сӑпкине сиктернӗ, поэзири ҫамрӑк хунавсене чечекленсе ӳсме пулӑшнӑ, тӑван халӑх культурине аталантарма пӗтӗм вӑя панӑ.

Сирӗн пархатарлӑ пурнӑҫӑр пире ялан ах халӑхшӑн ӗҫлеме хавхалантарать, этемлӗх культурин ирсӗр тӑшманӗсене — нимӗҫ фашисчӗсене — ҫапса аркатма кӗрешӗве чӗнет.

Тӑван ҫӗршыв телейӗшӗн ӗҫлеме Сире кумай кунҫул, ырлӑхпа сывлах сунатпӑр.

ЧӐВАШ СОВЕТ ПИСАТЕЛӖСЕН СОЮЗӖ.

Мухтав юрри-сӑввисемпе

Тӑван поэт Эльгер ятне
Паян эпӗр
Мухтав юрри-сӑввисемпе
Эрешлетпӗр.

Чаплӑ ятне ырӑ сунса
Пахалатпӑр,
Хӗпӗртӳллӗн уяв туса
Халалатпӑр.

Аллӑ ҫула ҫитнӗ ятпа
Савӑнатпӑр.
Тӑванлӑ туслӑ халӑхсем
Саламлатпӑр.

Юрла поэт, юрла чаплӑ
Юррусене.
Мухтав сана, чӑваш халӑх
Сӑвӑҫине.

Октябрь ҫулӗ ҫийӗнче
Халӗ эпӗр
Сан илемлӗ юррусемпе
Хӗпӗртетпӗр.

Санпа эпӗр питӗ ҫывӑх
Пурӑнатпӑр.
Тӑван чӗлхене чӗререн
Юрататпӑр.

Пӗр-пӗринпе ялан ӑшшӑн
Юмахлатпӑр.
Телейлӗ ҫут пурнӑҫшӑн
Тӑрӑшатпӑр.

Социализмлӑ ҫӗршыв
Ҫапла пирӗн.
Ҫутта тухма алӑк усӑ
Ывӑл-хӗрӗн.

Аслӑ вырӑс халӑхӗпе
Эпир паттӑр.
Гитлер харам-пырӗсене
Аркататпӑр.

Ялкӑш, Эльгер, ӗмӗр ялкӑш,
Сана калам.
Юбилей ячӗпе, тусӑм,
Хӗрӳ салам.

Гитлеризма аркатакан
Вӑй-хӑвачӗ —
Сывӑ пултӑр Хӗрлӗ Ҫарӑн
Паттӑр ячӗ.

Тӗнчен чаплӑ Маршалӗ
Аслӑ Сталин
Сывӑ пултӑр ҫӗнтерӳллӗ
Ҫулпуҫ пирӗн.

Н. И. ШЕЛЕПИ,
Чӑваш халӑх поэчӗ, орденоносец.

Мухтав сана

Ерипен сӑн-тӗссем улшӑнаҫҫӗ
Таврӑнми иртнӗҫемӗн ҫулсем,
Анчах пурпӗр чӗре вӑй-хӑвачӗ
Ларас ҫук нихӑҫан та сӳнсе.

Эсӗ пулнӑ хӗнхур айӗнче те,
Эсӗ курнӑ кулак куллине,
Анчах ӗҫӗн тулли вӑй-хӑвачӗ
Ӳсе пынӑ санра кулленех.

Ҫавӑнпа вутлӑ ҫил-тӑвӑл витӗр
Сапӑҫса, ҫӗнсе пынӑ чухне,
Сӑввупа, юррупа эс хӗруллӗн
Ҫӗклентернӗ ӗҫхалӑх чунне.

Пуян пурнӑҫ тӑвасшӑн кӗрешнӗ
Ҫутӑрах ҫутатса хӗвеле,
Халӑха малалла утма чӗннӗ
Ленин — Сталин ялавӗпеле.

Тав сана, тӑван халӑх поэчӗ!
Юбиляр, сана ӑшӑ салам!
Санӑн паттӑр чӗрӳ вӑй-хӑвачӗ
Кӑвар пек вӗри пултӑр ялан!

Вӗри чун ӑшӗнчен вӗри юрӑ
Шӑранса тапса тӑтӑр куллен, —
Тӑшмана пырса ҫаптӑр хаяррӑн,
Пире кӳтӗр мухтав те телей.

Уй-хир урлӑ, сенкер пӗлӗт ҫийӗн
Вӗҫсе кайтӑр инҫе те инҫе, —
Пуҫ усма юратман Совет ҫынӗ
Тек усратӑр ӑна чӗринче.

Тав сана, тӑван халӑх поэчӗ!
Кунҫулу вӑрӑм пултӑр, Эльгер!
Аслӑ Сталин пире пурнӑҫ пачӗ,
Ун ҫинчен ырӑ юрӑ ҫӗклер!

Иван МАЛГАИ.

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Хусанти ялхуҫалӑх институчӗн профессорне Борис Иванович Горизонтова хисеплӗ ят— Чӑваш АССР наукӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ ятне парасси ҫинчен

Профессор пулса 25 ҫул ӗҫленӗ май, ҫӗре ҫемҫетес ӗҫре Чӑваш республикинчи фосфоритсемпе усӑ курассине наука енчен ӑнӑҫлӑн тӗпченӗшӗн, Чӑваш республикинчи тата унпа юнашар республикӑсемпе облаҫсенчи ялхуҫалӑх производствинче фосфорит ҫӑнӑхӗпе усӑ курас ӗҫе анлӑн сарса янӑшӑн Хусанти ялхуҫалӑх институчӗн профессорне, ялхуҫалӑх наукисен докторне Борис Иванович Горизонтова хисеплӗ ят — **Чӑваш АССР наукӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ ятне** парас.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 ҫулхи майӑн 26-мӗшӗ.

МТС ҫураки планне тултарчӗ

ИШЛЕЙ, майӑн 26-мӗшӗ. (Телефонпа). Суркунне тракторсемпе тумалли ӗҫсен планне тултартӑмӑр. План тӑрӑх пирӗн 4.257 гектар сухаламаллаччӗ, эпир 4.340 гектар сухаларӑмӑр. Уйрӑмӑнах тракторсен 1-мӗш бригади (бригадирӗ Н. Елахов юлташ) авап ӗҫлерӗ, вӑл хӑйӗн планне 137 процент тултарчӗ. Ҫак бригадӑри А. Сергеева трактористка 45 гектар вырӑнне 75 гектар сухаларӗ. Ванеев юлташ ертсе пыракан 12-мӗш бригада та хӑйӗн планне 129 процент пурнӑҫларӗ. Трактористка Анна Услаева юлташ 45 гектар вырӑнне 73 гектар сухаларӗ. 9-мӗш бригада (бригадирӗ Ефимов юлташ) хӑйӗн планне 127 процент тултарчӗ. Тракторист С. Васильев юлташ, 149 гектар сухаласа, плана 200 процент тултарчӗ.

Анчах та пирӗн МТС-ра япӑх ӗҫлекен бригадӑсем те пур-ха. Зайцев юлташ ертсе пыракан 10-мӗш бригада ҫуркунне тумалли ӗҫсен планне 57 процент кӑна тултарчӗ. Начар ӗҫлени пӗтӗмпех машинӑсене техника енчен лайӑх пӑхса тӑманнинчен, ҫавна пула вӗсем час-часах пӑсӑлнинчен килчӗ.

Тракторсемпе татах та ӗҫлемелле пулать-ха, мӗншӗн тесен районра ҫураки ӗҫне пӗтермен колхозсем нумай-ха. Анчах та горючи ҫукки чӑрмантарать. Калас пулать, кун пирки плана тултариччен те чӑрмавсем нумай пулчӗҫ. Ака вӑхӑтӗнче тӗрлӗ организацисенчен крассын 7 тоннӑна яхӑн кивҫен илсе ӗҫлеме тиврӗ.

Е. РЯЗАНОВ,
МТС директорӗ.

Чăваш халăх поэчĕ С. В. Эльгер 50 çул тултарчĕ

Халăх поэчĕн çулĕ

Семен Васильевич Эльгерĕн пурнăçĕпе пултарулăхĕ чăваш халăхĕн историллĕ кунçулĕпе таччăн çыхăнса тăрать. Хăйĕн произведенийĕсенче вăл халăх пурнăçĕн чи паллăрах та драмăлăрах тапхăрĕсене çутатса панă. Çавăнпа та халăх унăн произведенийĕсене пысăка хурса хакларĕ, ăна хăйĕн юрăçи тесе йышăнчĕ.

Хăйĕн пултарулăхĕ çăлкуçланса тухнă кунсенчех, чĕрĕк ĕмĕр каярах, С. В. Эльгер, чăваш халăхне чĕнсе, çапла çырнă:

Манмăп, манмăп эс, чăваш,
Иртнĕ хурлă мăшкăла...
Малашна та эс паллаш,
Юрат ăна, аслăла!..

Пĕр Октябрь вучĕ çех
Çăлчĕ сана мăшкăлран,
Пĕр советсем урлă çех
Эсĕ сын пек шутланан.

Совет влаçĕ чăваш халăхне ĕмĕрхи чуралăх сăнчăрĕнчен хăтарчĕ, ăна пуçĕпех пĕтсе ларассинчен çăлчĕ, хуçалăхпа культура тĕлĕшĕнчен аталанмалли аслă çул çине кăларчĕ. Пирĕн халăх иртнĕ хурлă мăшкăла манмасть. Социализмлă çĕршыври мĕнпур тăванла халăхсемпе пĕрлех вăл, иртнĕ асапла та мăшкăллă кунçул каялла ан таврăнтăр тесе, мĕн кирлине пурне те тăвать.

Аслă Октябрь хĕвелĕ çутатнипе халăхăн тĕлĕнмелле пултарулăхĕсемпе талантĕсем ÿссе чечекленчĕç. Патша Российĕн тĕпсĕр тĕрминче халăхăн чи лайăх ывăлĕсем хăйсен пултарулăхĕн ăмăрткайăкăнни пек çуначĕсене сараймасăрах пĕтнине пирĕн халăх манмасть. Çавăнпа та вăл, хăйĕн ирĕклĕхĕпе чыслăхне фашистла нимĕç аркатуçисенчен сыхласа хăварас тесе, мĕн кирлине пурне те тăвать.

Октябрьти социализмлă революципе совет влаçĕ кăна чăваш литературине ÿссе чечекленме, чăваш писателĕсене вара тăван çĕршывра, тăван çĕр çинче хăйсен гражданла прависене туянма май туса пачĕç.

Пирĕн çĕршывра социализм çĕнтернине пула, тĕрĕслĕхпе халăхсен аслă туслăхĕ çĕнтернине пула, çав çĕнтерÿсене пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар отечественнăй вăрçă фрончĕсенче геройла хÿтĕленине пула, паян эпир чăваш халăхĕн чи лайăх ывăлĕсенчен пĕри С. В. Эльгер çуралнăранпа 50 çул тултарнине палăртма пултаратпăр.

Эльгер юлташăн пурнăç çулĕ вăл — пирĕн çĕршывра совет влаçĕ пуçлансан культурăпа творчество ĕçне хутшăннă çĕршер те пиншер çынсен çулĕ пулса тăрать.

Эльгерĕн «Çамрăк хурăн» ятлă малтанхи сăвви «Канаш» хаçатра (халĕ «Чăваш Коммуни») 1921 çулхи февралĕн 21-мĕшĕнче пичетленсе тухнă. Халăх юрри майлă çырнă çав сăвăра автор çутçанталăк илемне—этемлĕхшĕн килсе çитнĕ çуркуннен илемне сăнласа кăтартать. Вăхăт çитрĕ, кайăксен çуркуннехи савăнăçлă юррисем, çутçанталăк юррисем ĕмĕрхи чуралăхран ирĕке тухнă этем юррисемпе пĕр кĕвĕллĕн янăрамалли вăхăт çитрĕ. «Куççул тăкнă куççене ĕмĕрлĕхе типĕтсе, хавас юрă шăрантап»,— тесе çырать поэт.

Çапла çĕнĕ совет саманин çĕнĕ кунĕсемпе пĕрле поэтăн пултарулла та хĕрÿллĕ пурнăçĕ пуçланать. Унăн «Этеме», «Карпатра», «Кам тĕнчере усăллă», «Çуркунне» тата ытти сăввисем пичетленсе тухаççĕ. Вĕсене поэт 1917—18 çулсенчех çырнă пулнă, анчах вăл пичетлеме васкаман; вăл хăйĕн сассине, хăй шухăшĕн çивĕчлĕхне ытларах тĕрĕслеме шутланă.

Поэтăн малтанхи вунă çул хушшинче çырнă сăвви-юррисене (1917—1927 ç. ç.) кайран «Самана» ятлă кĕнекере пĕрлештерсе кăларнă. Çав кĕнеке чăваш халăхĕн юратнă кĕнеки пулса тăчĕ.

Чуралăх тĕнчинчен пирĕн халăх çĕнĕ саманана — социализм саманине куçса пыни, пирĕн Тăван çĕршыври халăхсем ирĕклĕхпе телейшĕн кĕрешни, аслă Совет Союзĕнчи халăхсем хушшинчи туслăхпа тăванлăх, пĕртанлăх çирĕпленни,— çакă пулса тăрать ĕнтĕ «Самана» кĕнекен содержанийĕ.

Революциллĕ кĕрешÿре, социализм строительствинче чăваш халăхĕ пирĕн çĕршыври ытти мĕнпур халăхсемпе пĕрлех, хăйĕн чăн-чăн этем тивĕçлĕхне тупрĕ. «Хаяр революци хĕрсе, тĕлкĕшсе хĕнхур тĕнчине кĕлентерне чухне, чăваш ĕççынни те часах вăй илсе:—Этем-çке мĕн эп те! — терĕ хăйне», тесе çырать поэт «Ирĕклĕх юрри» ятлă сăвăра.

— Эпĕ те, этем! — Çакă вăл чăваш халăхĕ хăй çĕнтерсе илнĕ ирĕклĕхшĕн савăннипе пĕтĕм чун-чĕринчен каланă сăмах пулса тăрать.

Хăйĕн нациллĕ тивĕçлĕхĕпе чапĕ вăйлăн ÿснипе хавхаланнă чăваш халăхĕ хăй кĕрешÿре утса тухнă пурнăç çулĕпе интересленме тытăнчĕ.

Халăх умĕнчи тивĕçе туйса тăни поэта «Хĕнхур айĕнче» ятлă историллĕ пысăк поэма çырма хăват пачĕ.

Çав поэмăра çырса кăтартнă событисем Пугачев пăлхавне пуçарнă хыççăн пĕр вунă çул каярах пулса иртеççĕ. Поэт çав пăлхавăн тапхăрне тÿрех илмен тесе, ăна ÿпкелеме те пулмă пулĕччĕ. анчах Эльгер хăйĕн поэминче урăхла задача лартнă. Вăл çакна кăтартса пама ĕмĕт тытнă: патша палачĕсем Пугачев пăлхавне хаярран пусарса лартнă пулин те, Пугачев юхăмĕн идейисем, вăл чĕртсе янă çулăм халăхра сÿнмен, вĕсем ирĕклĕхе ĕмĕтленекен халăх чĕринче сÿнме те пултарайман. Халăх вилĕмсĕр — унăн ĕмĕчĕсемпе шухăшĕсем те вилĕмсĕр.

«Хĕнхур айĕнче» поэма Эльгер пултарулăхĕнче те, çавăн пекех пĕтĕм чăваш литературинче те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл, классикăллă произведени пулса, пирĕн çамрăк литературăн пуянлăхне Константин Ивановăн «Нарспи» ятлă гениллĕ поэмипе пĕртанах кĕрсе юлать. Халăх юрри-сăввисен чĕлхипе тата тарăн реализм стилĕпе çырнă поэма чăннипех те геройла эпопея пек янăрать. Историллĕ событисене пур енчен те тĕрĕс кăтартса панă, геройсен сăн-сăпачĕсем питĕ ĕненмелле тухнă. Вĕсем вулакан куçĕ умне чĕрĕ çынсем пулса, хăйсен пĕтĕм шухăш-кăмăлĕсемпе, вăйлă тата вăйсăр енĕсемпе, йăнăшĕсемпе тата çĕнтерĕвĕсемпе тухса тăраççĕ. Поэмăн тĕп геройĕсем — чухăн Чакка, ватă та аслă Тевенеш тата ыттисем те нумайлăха асра юлаççĕ.

Эльгер хăйĕн малашнехи пултарулăх çулне прозăпа икĕ произведени — «Вăрçă кунĕсем» тата «Шурăмпуç килсен» романсем çырса палăртрĕ, çав произведенисемпе пĕрле чăваш литературинче пĕрремĕш роман çуралчĕ.

«Вăрçă кунĕсем» кĕнекере империализмлă пĕрремĕш вăрçăн мĕнпур асапĕсене тÿссе ирттернĕ писатель хăрушă вăрçă çинчен, ирсĕр нимĕçсен тискер ĕçĕсем çинчен, вырăс салтакĕн класлă ăнланăвĕ ÿссе пыни çинчен, большевиксем империализмлă вăрçăран граждан вăрçи туса ярассишĕн кĕрешни çинчен питех те ĕнентермелле каласа панă

«Шурăмпуç килсен» романра та çавăн пекех халăх пурнăçĕн историллĕ паха тапхăрне — чăваш ĕççыннисем 1905—1907 çулсенчи революци вăхăтĕнче çĕршĕн, хăйсен гражданла прависемшĕн кĕрешнине кăтартса панă.

Эльгер писателĕн тĕп произведенийĕсене пăхса тухсан çакă курăнать: вĕсем пурте пирĕн халăх хăйĕн чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн, юратнă Тăван çĕршыва юлнă харам-пырсенчен тасатассишĕн кĕрешнин чи паллă историллĕ тапхăрĕсене кăтартса паракан эпикăллă произведенисем пулса тăраççĕ.

Ĕçхалăхĕн телейлĕ те ирĕклĕ пурнăçĕ ÿссе чечекленнĕ çĕршыв çине ирсĕр те ултавлă тăшман — нимĕç фашизмĕ килсе тапăнсан, пирĕн ирĕклĕ халăхсем умне вилĕм хăрушлăхĕ тухса тăрсан, тăван халăхăн шанчăклă ывăлĕ — Семен Васильевич Эльгер, фашистла нимĕç ирсĕрĕсене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерме чĕнсе, хăйĕн сассине пачĕ.

«Хаярлăх сăмахĕ» сăвăра вăл çапла çырать:

Чăваш çĕршыв мар пирĕн çĕр,
Çынни ун—вутчулĕпе пĕр.
Тăшманшăн эпир пит хаяр.
Пирте — иксĕлми вăй-хăват.
Пире фашистсен орди мар,
Çĕнеймĕ нимĕнле хăямат!
Этем ирĕке савнă чух
Фашизм пире çĕнес çук!

Аслă Ленин хулине хÿтĕлекенсене халаласа, Эльгер «Ленинград» сăвă çырчĕ.

Темле эсрел урса килсен те,
Хăруш самант тухсан умна —
Тăван çĕршыв пур енчен те
Гранит сăрт пек хÿтлет сана.
Чăваш, тутар, мордва, грузинĕ —
Тăванлă пурте вырăспа;
Совет çемьин пур халăх çынĕ
Тăрать халь саншăн кăкăрпа.
Нихçан та манмăн ÿлĕм эсĕ
Чăваш Смирнов пек çынсене,
Нева çинче калла сикмесĕр
Хăват тунă геройсене.

Ленинграда паттăррăн хÿтĕлекенсенчен пĕрин — пирĕн земляк Иван Смирнов пулеметчикăн паттăр ĕçĕ поэта пысăк поэма çырма хавхалантарчĕ, çакăнпа пĕр вăхăтрах вăл «Çĕршыв ывăлĕсем» ятлă аңлă произведени çырать.

Хăйĕн художествăллă пултарулăхĕнче С. В. Эльгер халăх творчествипе анлăн усă курать, хăйĕн поэзине халăхăн илемлĕ те сĕткенлĕ сăмахĕпе, халăх юмахĕсемпе халлапĕсен образĕсемпе пуянлатать. Çак паха традици пирĕн литературăра К. В. Иванов, Н. Шелепи, Çеçпĕл Миши творчествисем урлă пырать, Эльгер çав традицие малалла тăсать.

Иртнĕ вăрçăра сывлăхĕ хавшанă пулин те, Эльгер юлташ, творчествăра хĕрÿллĕ ĕçленипе пĕрлех, редактор ĕçне ывăнма пĕлмесĕр туса пырать, литературăн çамрăк кадрĕсене ÿсме пулăшать.

Чăвашсен илемлĕ литературине аталантарса пырас тĕлĕшпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1940 çулхи июлĕн 23-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх Семен Васильевич Эльгер юлташа чăваш халăх поэчĕн ятне панă

Аслă Ленин—Сталин партийĕ пăхса çитĕнтернĕ халăх ывăлĕ — Эльгер юлташ хăйĕн пурнăçне пултарулла та хĕрÿллĕ ĕçпе тата сăпайлăхпа илемлетрĕ. Вăл хăйĕн нумай енлĕ пурнăçĕпе пире, çамрăк литераторсене, халăх ĕçĕшĕн пĕтĕм чун-чĕререн парăнса ĕçлеме вĕрентет. Унăн творчествăллă опычĕ çамрăк писательсене çакна кăтартса парать: чăн-чăн художник, пуринчен малтан, пурнăçран тĕп темăсем суйласа илме пĕлмелле, писателĕн хăйĕн халăхĕпе тата халăх творчествипе таччăн çыхăнса тăмалла.

Çак чаплă кун юратнă поэтăмăра — Семен Васильевич Эльгере аслă Тăван çĕршывшăн, халăхшăн, ылханлă тăшмана çĕнтерессишĕн татах та нумай çул хушши пултаруллăн ĕçлеме ырă сунар!

А. ЭСХЕЛЬ.

Антони Иден господина, Великобританин ют çĕршыв ĕçĕсен министрне

ЛОНДОН

Совет Союзĕпе Великобритани союзлă договор туни икĕ çул тултарнă кун эпĕ Сире, Британи правительствине тата Британи халăхне Совет Союзĕн правительствипе халăхĕ ячĕпе, çавăн пекех тата хамран та туслă салам яратăп, чи лайăх пурнăç сунатăп.

Совет çарĕпе союзниксен çарĕсен çапăçури ăнăçăвĕсене пула гитлерла Германин вăйĕсем халĕ хавшанă. Халĕ пирĕн пĕрлехи задача ĕнтĕ пĕрле татăклăн пырса çапса, тăшмана пĕтĕмпех çапса хуçасси, ăна пĕтерсе тăкасси пулса тăрать. Англипе Совет Союзĕн тата Америкăн коалицийĕ пирĕн пĕрлехи тăшмана — гитлерла Германие çĕнтерни пирĕн çĕршывсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлессине тата ытларах çирĕплетĕ, вăл ирĕке юратакан мĕнпур халăхсене пĕр-пĕринпе туслăн çыхăнса пурăнма çирĕп никĕс туса парĕ.

В. МОЛОТОВ.

Унăн превосходительствине В. М. Молотова, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне

МУСКАВ

Англипе Совет Союзĕ пĕр-пĕринпе союзлă пуласси çинчен договор туни икĕ çул тултарнă кун эпĕ Сире тата Сирĕн урлă Совет Союзĕн Правительствипе халăхне салам яратăп тата ырă сунатăп, çавăн пекех эпĕ Унăн Величествин Правительствипе Пĕрлешÿллĕ Королевство халăхĕн ячĕпе те салам ярса ырă сунатăп.

Мускаврипе Тегеранри конференцисенче пысăк событисем пулассине палăртса хунă. Пирĕн икĕ халăх Америкăпа тата ытти союзниксемпе пĕрле алла-аллăн тытăнса кĕрешсе, пирĕн пĕрлехи тăшмана хăватлăн штурмласа çĕнтерĕç, çапла вара пирĕн союз никĕсĕнче тăракан туслăха тата пĕр-пĕрне ăнланнине çирĕплетĕç.

Антони ИДЕН.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, майăн 25-мĕшĕ (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен Италири çарĕсем çĕнĕ çитĕнÿсем тунă. Майăн 24-мĕшĕнче ирхине Канада корпусĕн бронетанковăй чаçĕсем Канада пехоти хывнă çулпа «Гитлер линийĕ» ăшне кĕрсе кайнă. Çав бронетанковăй чаçсем тăшман тăракан вырăна шалалла инçех кĕрсе кайнă, Мельфа шывĕ патне çитнĕ. Понтекорвона тăшмантан тасатнă.

Америкăн 5-мĕш армийĕн фронтĕнче тăшман нумай вырăнсенче каялла чакнă. Союзниксен çарĕсем Террачина хулине, Соннинона (Террачинăран çурçĕртерехре) тата Роккасакка Деи Мольшие (Приверно таврашĕнче) туртса илнĕ.

Анцио районĕнчи плацдармра союзниксен çарĕсем çаплах хăйсене малалла кайма тăшман оборонин системи урлă çул уçассăн çапăçнă. Чистернăран çурçĕртерехри çула татнă, пĕр пин салтака ытла тыткăна илнĕ.

Енер вăтам бомбардировщиксем тăшманăн Италири объекчĕсене тапăннă. Кун каçиччен тăшманăнне сахалтан та 65 самолет пĕтернĕ. Союзниксен 31 самолет пĕтнĕ. Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ кун каçиччен 2.950 вĕçев тунă.

БАДОЛЬО ПРАВИТЕЛЬСТВИН РЕЗОЛЮЦИЙĔ

ЛОНДОН, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Неопольти корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Бадольо правительстви Италин тулашри политики тĕлĕшпе йышăннă пĕрремĕш решенине пичетлесе кăларнă, çав решение пĕтĕм кабинет ырланă.

«Фашистла правительствăн тулашри пĕтĕм политики Итали халăхĕн ирĕкĕпе интересĕсене хирĕç пынă, — тенĕ çав резолюцире,—пĕтĕм тĕнчери халăхсене пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнтарас идеалсене тата организацисене — гитлерла Германипе пĕрле пăрса ярса тата пирĕн халăха Франципе Англие хирĕç, унтан Российăна, Пĕрлешÿллĕ Штатсене, Греције, Югославие хирĕç (Итали кăмăллăн çыхăнса тăма тивĕçлĕ мĕнпур халăхсене хирĕç) пыракан вăрçа хутшăнтарса вăл халăха чуралантарчĕ тата сутрĕ. Çав вăрçă вăл Итали интересĕсемпе пĕрех те килĕшсе тăмасть. Хăйĕн чăн-чăн тăшманĕпе çапăçнăшăн савăнса хĕпĕртенĕ Итали гитлерла Германие пуçĕпех пĕтерсе тăкиччен вăрçасшăн, мĕншĕн тесен нимĕçсен расăпа милитаризм тиранийĕ пĕтни итальянецсен чи аслă интересĕсемпе килĕшсе тăрать».

Резолюцире тата çапла каланă: Бадольо правительстви фашистсем тĕрĕс мар тунине, пусмăрланине тĕплĕн тĕпчесе пĕлме тата айăплисене пысăк наказани пама шутлать, тенĕ.

БОЛГАРСЕН ÇАР МИССИЙĔ ГЕРМАНИЕ КАЙНИ

СТАМБУЛ, майăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). София хулинчи радио пĕлтернĕ тăрăх, халĕ Германире болгарсен çар миссийĕ пурăнать. Çав миссин официальнăй тĕллевĕ—гитлеровецсем Вена хулинче уçнă вăрçă выставкинчи япаласене вĕренесси пулса тăрать. Софияри радио çапла пĕлтерет: болгарсен çар миссине болгарсен Берлинри çар атташи Дамянов ертсе пырать. Çав çар миссийĕ Венăри вăрçă выставкинче пулнă, унта вăл Германи генералĕпе Шубертпа курса каласнă. Болгарсен миссийĕ ячĕпе выставкăра хисеплĕ хурал тăратнă.

Стамбулра çапла шутлаççĕ: болгарсен çар делегацийĕ Германие кайнин тĕллевĕ вăрçă выставкине кĕрсе курнипе пĕтес çук, вĕсен тĕп тĕллевĕнче — халĕ Германипе Болгари хушшинче вăрçă пирки пыракан калаçусем тăраççĕ пулмалла, теççĕ.

Кунта халĕ çакна пĕлнĕ: Болгари çарĕн кунне (майăн 6-мĕшне), Берлинран панă приказ тăрăх, пĕтĕм Германире тата вăл оккупациленĕ çĕршывсенче те анлăн паллă туса ирттернĕ. Çав куна паллă туса ирттерес тĕлĕшпе Германин чылай хулисенче, çавăн пекех тата Венăра, Загребра, Вратиславăра, Белградра, Будапештра çар парачĕсем пулнă. Çав парадсенче пуринче те Болгари çарĕн представителĕсем пулнă.

БОЛГАРСЕН ДИВИЗИЙĔСЕНЕ БОЛГАРИПЕ РУМЫНИ ЧИККИНЕ КУÇАРАÇÇĔ

ЛОНДОН, майăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: болгарсен икĕ дивизине Болгарипе Румыни чиккине куçарнă, вĕсене унта Рущук хулинчен хĕвелтухăçнерехре Дунай шывĕн кăнтăр хĕррипе вырнаçтарса тухнă. Апрель уйăхĕн пуçламĕшĕнче болгарсен ытти 2 дивизине Кăнтăр Добруджăна янă пулнă.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, майăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтереççĕ: Англин бомбардировочнăй авиацийĕн пысăк соединенийĕсем майăн 25-мĕшĕ ыран тепĕ чух çĕрле Аахен хулинчи сортировка станцине (Хĕвеланăç Германи), Антверпен хулинчи автосборочнăй завода тата Францири вăрçă объекчĕсене тапăннă. Çавăн пекех тата Берлинри объектсем çине те бомбăсем пăрахнă. Акăлчансен 128 самолечĕ хăйсен базисене таврăнман.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: майăн 24-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕн йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Вена сывăхĕнчи тата Винер-Нейштад сывăхĕнчи авиаци завочĕпе икĕ аэродрома тапăннă. Тата унсăр пуçне Тренто хули сывăхĕнчи (Итали) Авизио шывĕ урлă хывнă чугун çул кĕперĕ çине те бомбăсем пăрахнă, ку чугун çул Бреннер ту каççи патнелле каять. Çавăн пекех тата Австрипе Югославири вăрçă объекчĕсем çине те бомбăсем тăкнă. Çак тапăнусенче союзниксен авиацийĕн 500—700 йывăр бомбардировщикĕ пулнă.

СЛОВАКИН КАРПАТ ЗОНИНЕ НИМĔÇСЕМ ОККУПАЦИЛЕНĔ

ЛОНДОН, майăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословаксен телеграф агентстви Германи чиккинчен илнĕ хыпарсем тăрăх, Германи çарĕсем Словакин пĕтĕм Карпат зонине оккупациленĕ. Нимĕçсем Чехословаки территорине Венгри енчен пырса кĕнĕ. Вĕсем унта словаксен квислингĕсем Тисопа Тука Гитлер ставкинчен майăн 21-мĕшĕнче тухса кайсанах каçма пуçланă. Тисопа Тука çак юлашки кунсенче Гитлер ставкинче пулнă.

ГЕРМАНИПЕ ФИНЛЯНДИ ХУШШИНЧИ «СУТУ-ИЛУ»

СТОКГОЛЬМ, майăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Финн хаçачĕсем Финляндин йывăç ĕçлекен промышленноçĕ пĕтес патне çитни çинчен калакан материалсем пичетлеççĕ. Германи Финляндипе сут тунă чухне çаратуллă пысăк хаксем хурса, Финляндин йывăç ĕçлекен промышленноçне пĕтес патнех çитернĕ. «Хельсингин саномат» хаçат каланă тăрăх, Финляндирен Германие ăсатакан таварсен хакĕ 9 процент çеç ÿснĕ, çав вăхăтрах Германирен Финляндие илсе пыракан таварсен хакĕ 200 процент тата ытларах та ÿснĕ. Кунсăр пуçне, Германи представителĕсем финсенчен вăрман материалĕсене кивçен илеççĕ.

Финляндин суту-илÿ флочĕ те питĕ начар. Финляндин суту-илÿ флочĕ вăрçă пуçланнăранпа, çав хаçат каланă тăрăхах, хăйĕн тоннажĕн 40 процентне çухатнă. Финлянди çав çухатусене хăй вăйĕпе саплама пултараймасть. Ют çĕршывсенчен суднăсем сутăн илме те шанчăк çук.

ШВЕДСЕН ХАСАЧĔ БЕРЛИНРИ ЛАРУ-ТĂРУ ÇИНЧЕН

ГЕТЕБОРГ, майăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Шведсен «Гетеборгс Хандельстиднинг» ятлă хаçачĕ çапла çырать: Германире каллех кивĕ тумтирсене пухмалла тунă—вĕсне çитсе тăрăннă ĕç пулса тăрать, мĕншĕн тесен Германире ĕнтĕ темиçе çул хушши никама та промышленность таварĕсем паман. Хаçатра çырнă тăрăх, япаласене каллех пухни Германири халăха çиллентерсе янă. Германири апат-çимĕç тĕлĕшпе ĕç мĕнле тăнине пăхса тухнă май, хаçат çапла çырать: «Украинăна вырăссем каялла туртса илни Германин апат-çимĕç балансне пĕтĕмĕшпех арпаштарса ячĕ», халĕ Германи халăхĕ умне йывăр вăхăтсем килсе тухрĕç, — тет.

КĔСКЕН

▲ Вăрçă пуçланнăранпа Англи, ватăман илсен, кашни сехетре 2,5 самолет, 1,5 тупă, 4.000 снаряд ытла, 180.000 патрон туса кăларса тăнă. 1943 çулта США-па пĕтĕм Британи империйĕ иккĕшĕ пĕрле, вăтамран илсен, кашни сехетре 14,5 самолет, 9 тупă, 106.000 снаряда яхăн тата 3 миллиона яхăн патрон туса кăларса тăнă.

▲ Римра апат-çимĕç тĕлĕшпе лару-тăру питĕ хĕсĕнсе çитнĕ. Темиçе çĕр пин çын калама çук йывăр нуша курса пурăнать. Кунсерен темиçе вунă çын выçăпа вилет. Халăха кунсерен 100-шер грамм çăкăр парас вырăнне малашне 70 грамм кăна парасси çинчен официально пĕлтернĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ

С. В. ЭЛЬГЕР

Ç А П Ă Ç У

(„Лейтенант Смирнов“ поэмăран).

Аçа-çиçĕм чухнехи пек
Хир кĕрленĕ пĕрех хут;
Пур орудисем талккишпе
Сапнă тимĕр-тăмăр, вут.
Аманни те, вилнисем те
Пулнă ĕнтĕ сахал мар.
Паттăр взвод — йыш иксĕлсен те —
Тăнă çирĕп, пит хастар...
Ак сасартăк нимĕçсенĕн
Артиллери чарăнать,
Паллах, ирсĕр çĕленсенĕн
Урăх ĕçĕ пуçланать...
Ибмăхланчĕ хĕвелтухăç.
Сÿнчĕç пăнчă çăлтăрсем...
Пĕлĕтсем шав тухрĕç, юхрĕç,
Тулчĕç тÿпене вĕсем...

— Ав, куратăр-и, килеççĕ
Нимĕç выç çăханĕсем...
Пирĕн çинеллех вĕçеççĕ..
Асăрханăр, юлташсем! —
Терĕ Зайцев, çамрăк çармăс
Мал енне кăшт кăтартса.
— Кунталлах вĕт... Çирĕм харăс,
Тет ун кÿршĕ хумханса.
Улăх тăрăх, хырлăх çийĕн,
Карласа, кĕр-кĕрлесе
Çывхараççĕ айлăн-çийлĕн
Нимĕç самолечĕсем.
— Ан шикленĕр... пурте выртăр!
Çухалмасăр, пикенсе
Хĕçпăшаларсене тытăр,
Перĕр лайăх тĕллесе, —
Терĕ командир васкавлăн,
Выртрĕ пулемет патне.

Ушкăн самолет тăшманăн
Çитрĕ ĕнтĕ тÿпене,
Шăхăрса пĕр умлăн-хыçлăн
Анчĕç йывăр бомбăсем.
Çĕр кисренчĕ питĕ хыттăн, —
Аçа сапнă пек сассем...
Чалтăртатрĕ, вĕçрĕ, сикрĕ
Тимĕр-тăмăр, кÿр тăпра,
Сăрă сĕрĕм шăппăн витрĕ
Окопа пĕр самант...

Кам шутлатăр — çакăнта тек
Чĕрĕ çын юлать тесе?
Çĕр кăкри те арканать те —
Çын тăрайĕ-ши тÿссе!
Юлнă иккен, чĕрĕ чун та
Тарăн хушăк тĕпĕнче, —
Вилесси те, юхнă юн та
Хăратман тек вĕсене.
Пенĕ вĕсем, пенĕ хирĕç
Нимĕç «юнкерсĕсене»,
Сынçненçĕ ирсĕр нимĕç
Тарăхтарнă вĕсене...
Юнлă «юнкерссем» сив саслан
Кайнă малалла чăмса,
Окопсем çине пĕр майлăн
Вутлă бомбăсем тăкса...
Çавăнтах пĕр «мессершмичĕ»,
Пулемечĕпе асса,
Темиçе хут персе илчĕ
Смирновсем çинех анса.
— Кам вăйхаллă, пурте перĕр!
Моторпе тĕлле, Рябков,
Юнлă фриц тек ан сĕмлентĕр, —
Хушрĕ лейтенант Смирнов.
Пилĕк-ултă пăшалтан та
Виç-тăватă пулемет
Персе тăчĕç пĕр самантăн, —
Печĕ çиллĕн пĕтĕм взвод.
Фриц машинĕ ак чĕтренчĕ,
Вĕçме тăчĕ çÿлелле.
Çук! Кĕçех вăл сĕрĕмленчĕ, —
Анчĕ, анчĕ çĕрелле.
Укпĕ майăн çулăм хыпрĕ
Сĕмсĕр нимĕç машинне,
Вут-çĕлен пек анса выртрĕ
Вăл пĕр улăх шурлăхне.
— Ну маттур, ачам! Ĕç пулчĕ!
Хамăр юншăн ку тăшман
Хăйĕн сĕмсĕр пуçне хучĕ, —
Терĕ Смирнов кăмăлтан.
Пурте питĕ хавасланчĕç,
Сиçрĕç сассăр кулăпа.
Ырнисем те паттăрланчĕç,
Тулчĕç çĕнĕ вăйхалпа.
— Юлташсемĕр! курăр, пăхăр
Хир вăрманĕ тăррине
[illegible] самолсем ав... тăххăр...

Вăркăнаç тăшман çине, —
Кăшкăрсах калать хавассăн
Рудин хÿхĕм çын, сержант.
Пурте курчĕç: ак пĕр кассăн
Çитрĕç вирхĕнсе самант.
Вырăс хурчкисем хĕрÿллĕн
Çитрĕç «юнкерссем» çине.
Чăмрĕç вирлĕн, çĕнтерÿллĕн,
Тÿрех ушкăн варрине.

Пирĕн тăхăр истребитель
Çирĕм «хейнкель»-«юнкерспа»
Çиллĕн, тарăхуллăн пит те
Тытăнаç ак çапăçма.
Вичкĕн кăйкăрч кайăксем пек,
Нимĕçсем çинче вĕçсе,
Вирхĕнеççĕ шав вĕсем тек
Вутлă пуля пĕрĕхсе.
Хĕрлĕ çутăпа хĕмленнĕ
Хĕвелтухăçĕ енче,
Сĕрĕм-тĕтрепе пĕркеннĕ
Хыр вăрманĕ тĕлĕнче.
Сывлăш талккăшĕ пĕр хушă
Вутлăп-хĕмлĕн çаврăнать.
Штурмлă çапăçу хăрушшăн
Çĕр питне те сăркатать.
Сывлăшри пур пулемечĕ
Шатăртатрĕ вут сапса:
Кĕç ак икĕ самолечĕ
Персе анчĕç ялкăшса.
Тÿсеймерĕ нимĕç сĕмсĕр
Пирĕн сокăлсен вăйне, —
Тăкрĕ бомбисене тĕлсĕр, —
Кайрĕ, тарчĕ хăй енне.
Пирĕн тăхăр ăмăрткайăк
Ик хут йышлă тăшмана
Сапрĕ-çĕмĕрчĕ пит лайăх,
Хуса ячĕ катана.
Пирĕн тăхăр сокăлран та
Сывă çиччĕн çеç юлса,
Вĕçрĕç аслăн, пĕр командăн,
Пĕлĕт айĕн ярăнса.
Алă çупрĕç, хавасланчĕç
Паттăр чунлă боецсем,
Пĕр сăмахсăр ăмăртланчĕç
Хыттăн çапăçма вĕсем.

С. В. ЭЛЬГЕР

ÇĔРШЫВ ТĔРЕКĔ— ХĔРЛĔ ÇАР

Çĕршыв тĕрекĕ — Хĕрлĕ Çар, —
Тăван вăйхал, хăватлă Çар, —
Мирпе чăн ирĕклĕх хÿтти,
Ĕçхалăхсен кунçул çутти!
Кунçул çутти, телей уççи,
Хисеплĕ пурнăç хуралçи.
Çак çĕр çинче эс сывă чух
Хурахсене асма çул çук!
Санпа тăрса хуравлашма,
Сан хурçă пек вăйна ватма
Нимле тăшманăн хал çитмест,
Ни хĕçпăшал, ни шăл витмест.
Каппайчăк Гитлер выç çарне
Кĕртсе ярсан Совет çĕрне, —
Тискеррĕн аснă тăшмана
Кăтартрăн эс виçми вăйна:
Тăван çĕре тустарнăшăн —
Тытса ăна хыт авăртрăн;
Юн тăкнăшăн, вĕлернĕшĕн
Тĕнче тÿсми тискерлĕхшĕн —
Тăхлан чĕреллĕ нимĕçе
Вутпа вĕтсе, питне кĕççе
Çĕлерĕн эс намăслатса.
Ана эс ятăн ывăтса
Мăн Атăлтан Карпат таран.
Усал тăшман тухать ăнран...
Хăватлă Çар, сунатлă Çар,
Ютсемшĕн эс — хăруш, хаяр.
Сан пурнăçу, çулу-йĕрÿ
Вăл — вĕçĕмсĕр пĕр çĕнтерÿ.
Астуччăр ирсĕр фашистсем,
Çăхан-çĕлен ăраттисем:
Никам çĕнми Çар хыçĕнче
Тăрать советлă çут тĕнче.
Совет тĕнчи — пĕр тимлĕ вăй,
Ана çулпуç ÿстернĕ хăй...
Мухтавлă çарăмăр, Хĕрлĕ Çар,
Фашизма аркат, çунтар!
Ан юлтăр вăл çĕр питĕнче.
Тĕп ту ăна хăй çĕрĕнче!

1944 ç.

ШУПАШКАР, [illegible] ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издатель[illegible] конторин —0—23.
Заказ №2 ф. б. Г9742 п. л. Тираж 14.400 экз.